Кĕр аки – 2009

# Пулас тухăç никĕсне хываççĕ





Çурла уйăхĕ вĕçленсе пырать. «Хир карапĕсем» юлашки çаврăмсем тунă май малашлăх пирки ĕмĕтленекен çĕр ĕçченĕ çитес çулхи тыр-пул тухăçне хывса хăварасси пирки те манмасть. Агротехнологие пăхăнакансем паян вăхăтра кĕр аки тăвассипе тăрăшаççĕ. Пирĕн районăн кăçал аталану технологийĕпе килĕшўллĕн 5500 гектар çурхи культурăсем акса хăвармалла. Çак тĕллеве маларахах йышăннă хуçалăхсем кĕртрисем акма çителĕклĕ çĕр хатĕрленĕ те ĕнтĕ. Кунта кăçал ытти çулхисенчен ытларах тата тĕллевлĕ таса пусăсем тытни те пысăк пулăшу.

Кĕр аки валли таса пусăсемпе ĕçлесси çине кăçал Суворов яч. хис., «Ударник», «Свобода», Чкалов яч. хис., Ильич яч. хис., «Оринино», «Герой» хуçалăхсем пысăк тимлĕх уйăрчĕç. Паян çак хуçалăхсенче кĕр аки калăпăшĕ те пысăкрах.

Кĕрхи культурăсем акас ĕç епле пынипе паллашма «Ударник» хуçалăхăн уйхирне çитрĕмĕр. Эпир çитнĕ чух К. Иванов яч.хис. хуçалăхăнне арендăна илнĕ 350 гектар çĕрĕ çинче акаçăсен ятарлă бригади ака технологине пăхăнса пулас тухăç никĕсне хывса хăварассипе тăрăшатчĕ.

– Паянхи ĕçе ырана хăвармасăр ĕçлесе хуçалăх ĕçченĕсем вырмана вĕçлерĕç ĕнтĕ. Ĕçсем çĕр улми пуссисене тата кĕрхи культурăсем вăхăтра акса хăварас çĕре куçрĕç. Кунта та хуçалăх ятне ямăпăр, – хастаррăн калаçать Любовь Михайловна Архипова акаçă черетлĕ михĕне сеялка çине илсе хунă май. – Улттăмĕш çул ака-сухана хутшăнатăп. Кашнинчех ака технологийĕ малти вырăнта пулни курăнать. Çакă вăл хуçалăх ертўçипе агрономи службин ĕçĕ. Вĕсен тимлĕхне пăсас теместпĕр.



Л. Архиповапа пĕрле ĕçлекен акаçă Валерий Федорович Зотиков та **(пĕрремĕш сăн ўкерчĕкре)** ĕçтешĕн кăмăлĕпе килĕшўллĕ пулнине палăртрĕ. «Кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ», – терĕ вăл пирĕн калаçăва хутшăнса.

Таса пусăсене çу каça пăхса тăнă механизаторсем паян акара. Кĕрпе пек выртакан тăпрана варăнакан кĕрхи тулă пĕрчисем тикĕс шăтса тухассишĕн иккĕленме те кирлĕ мар. Хĕреслĕ майпа акаççĕ вĕсене кунта тата минераллă удобренипе. Кĕскен каласан, ака технологийĕ малти вырăнта. Çакна хамăр калаçура 7-мĕш акана ДТ-75 тракторпа хутшăнакан Сергей Иванов механизатор **(виççĕмĕш сăн ўкерчĕкре)** çирĕплетрĕ. Сăмах май вăл ĕçлекен 3 сеялкăллă агрегатпа пĕрле асăннă уйра Алексей Давыдов, Алексей Иванов, Станислав Иванов механизаторсен ака агрегачĕсем ĕçлетчĕç. Ака вăрлăхне тата минераллă удобрение хире КамАЗ автомашинăпа кăларса тăракан Леонид Маноль та пĕрлехи ĕç хăвăртлăхне çўлте тытассипе тимлет.

Акаçăсем-грузчиксем те хăйсен ĕçĕнче маттур. Вĕсен тăрăшулăхĕпе ака агрегачĕсем хирте ĕççĕр ларни пулман-ха. «Çĕр ĕçченĕн кĕр çитсессĕн кашни кунĕ шутра», – пулчĕ вĕсен пĕрлехи хуравĕ. Эсир **иккĕмĕш сăн ўкерчĕкре** куракан (сулахайран сылтăмалла) Сергей Михайлов, Алексей Анисимов, Олег Ананьев, Александр Егоров акаçăсем хăйсен сăмахне çирĕплетсе сеялкăсене вăрлăхпа тата минераллă удобренипе тултарса ака агрегачĕпе хирелле кĕрсе кайрĕç. «Эрне хушшинче ака ĕçне вĕçлĕпĕр», – алă сулса хăварчĕç ĕç ăннипе кăмăллă акаçăсем.

«Ударник» сăнавлă производство хуçалăхĕн ĕç планĕпе килĕшўллĕн кăçал 700 гектар кĕрхи культурăсем акса хăвармалла. Ку вăл пĕлтĕрхинчен икĕ хут нумайрах.

**А. БЕЛОВ.**

Çыру калаçăва чĕнет

# Ырă тĕслĕхе таптас марччĕ

***Çын аллинчи кукăль тутлă курăнать тени тĕрĕсех-ши вара? Çапла шутлама манăн сăлтавĕ те пур. Тĕрĕсрех каласан, халĕ тĕвĕленчĕ ку шухăшлав. Эпĕ пурнăçра йывăç лартассине хамăн тĕллев тесе пурăнтăм: тăван ен илемлентĕр тесе вуншар мар, çĕршер йывăç лартса чĕртрĕм. «Ешертĕр тавралăх, ўстĕр çырла – тăван ен илемĕ пытăр ĕмĕре», – çак тĕллев хăваларĕ мана çырма-çатрана тата уй хĕррисене йывăçсем лартма.***

***Виçĕ çул каялла Юнкă ял тăрăхĕнчи Кăпас енчи Хуратан варне çамрăк хурăнсем лартса чĕртрĕм. Савăнмалла темелле, анчах... Çын ĕçне шута хуман тата тăван тавралăх илемĕшĕн пĕр пĕрчĕ те ĕç туман «хастарсем» нумаях пулмасть вĕсене милĕк тума касса кайрĕç. Йывăç çине улăхма хăраканскерсене «ăнланма пулать» вĕсене: кунта милĕк валли туратсем чĕркуççи çўллĕшĕнчех. Эх çапăнчĕç пулĕ ĕнтĕ çавсем мунчара. Анчах вĕсем йывăççене хĕрхенменнишĕн манăн чĕре паян та ыратать. Мĕншĕн çын лартнине касмалла? Касас шут пулсан хăвăр лартăр! Çырми-çатри Юнкă тăрăхĕнче те пайтах.***

**Сире хисеплесе тата кун пек ĕçе тек тумасса шанса Зинаида ЯГУНОВА.**

**РЕДАКЦИРЕН.**

Хурлăхлă çыруран ял çыннисем тивĕçлĕ пĕтĕмлетў тăвасса шанас килет. Малалла вара çыру авторĕ пирки.

Тури Кăпасра çуралса ўснĕ, Кĕçĕн Кăпаса качча тухса çемье çавăрнă Зинаида Егоровна Ягуновапа тĕл пулса калаçсан пирĕн хушăмăрта çут çанталăка калама çук юратакан çынсем пурри куç умне тухрĕ. Сăмах май, пирĕнтен чылайăшĕ çут çанталăка пуянлатасси пирки мар, унăн пуянлăхĕпе ытлă-çитлĕ усă курса юласси пирки ытларах пуç ватать. Çут çанталăк чăтать, теççĕ-ши? Çапла, чăтать, анчах вăл чăтăмлăхăн та виçи пур. Шайлашу çухалнăранах-тăр юлашки çулсенче унта та кунта çут çанталăк инкекĕсем кун йĕркине тухни курăнатьпалăрать.

Çут çанталăка юратсан, вăл та санран пăрăнмасть. Çакна пурте курсапĕлсе тăратпăр пулин те, тивĕçлĕ ĕçсем çине алă сулнипе ялсем тавра пĕвесем куçран çухалчĕç, çуллахи шăрăхра ачасем шыва кĕресси ыйтусен ыйтăвĕ пулса тăчĕ. Таса сывлăш кирлĕ тесе сăмахлатпăр пулин те, вăрмансем сайраланни унти тискер чĕр чунсемпе кайăккĕшĕк пирĕн тăрăхран сивĕнесси патне çитерет. Кунпа пĕрлех таса сывлăшра кану ирттересси манăçа тухса пырать. Çут çанталăка сыхласси кашни çын тивĕçĕ тени Президент хушăвĕпе пурнăçламалли ĕçе çаврăнать. Çапла вара пысăк шайри указсем хыççăн çеç çырмана йывăç лартма анатпăр, шывпа çил эрозийĕпе кĕрешме тухатпăр, çырмара пулăсем ĕрчетесси пирки шутлатпăр. Ку вара куллен пурнăçламалли ĕç. Çаксем пирки хăйĕн чун пăшăрханăвне уçса калаçрĕ Зинаида Егоровна.

– Вăрман лартасси – пирĕн ăруран ăрăва куçакан ĕç. Манăн маçак Мирон хăй вăхăтĕнче вăрман лартассипе нумай ĕçленĕ: вăрман лартнă, юман хăвалĕсенчен тунă вĕллесенче хурт-хăмăр ĕрчетнĕ, кашни ачине вĕллесем парнеленĕ те çав вĕллесем паянччenех ăруран ăрăва куçса пыраççĕ. Асатте ĕçне шута хурса паянхи Хурал çаран вăрманне ĕлĕкрех Мирон вăрманĕ тенĕ, – хăйсен ăрăвĕнче вăрман лартас ĕç ăçтан пуçланнине хăй тĕплĕ пĕлнине кăтартса калаçать Зинаида Егоровна.

Хастар хĕрарăм 20 çул хушшинче 5 гектар ытла вăрман лартнă. «Пĕччен мар, паллах»,– тет вăл хăйĕн сăпайлăхне кăтартма тăрăшса.

Çуркунне пушар хăрушлăхлĕ тапхăрта шкул ачисем лартнă çамрăк вăрмана «хĕрлĕ автан» кĕрсе кайнине курсан, Зинаида Егоровна малтан пĕчченех вăрман хўтлĕхне тăрать, анчах вăйсем тан мар... Курăк тăрăх кайнă çулăм пĕчĕк вăрмана кĕл турĕ, анчах пушар машинисем çитни инкеке сарăлма памарĕ. «Çывăхра выльăх ферми пулни те хăрушлăха ўстерчĕ», – аса илет çав вăхăта З. Ягунова.

– Юратнă йывăç пур-и? – ыйтатăп çут çанталăк тусĕнчен.

– Кашни йывăç паха. Вĕсем сывлăша уçăлтарни, тавралăха эрозирен хўтĕлени пĕтĕм чĕрĕ тĕнчешĕн пĕлтерĕшлĕ. Çакна ăнланса кашни çыннăн çуркуннекĕркунне ытларах йывăççем лартасчĕ, лартнă йывăça сыхласчĕ. Тăван тавралăх йывăçпа пуян пулсан, халăхсем хушшинче усал шухăш та пĕтĕччĕ, – тет яланах ыррине шанакан Зинаида Егоровна хăйне ытларах хурăн килĕшнине палăртса.

**А. ПЕТРОВ.**

Паянхи кун ыйтăвĕсемпе

# Кĕр аки çĕнĕлĕх ыйтать

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Н. Турбина академик кăтартăвĕсемпе тритикале тыррин пĕр апат единицинче ирĕлекен белок хисепĕ 110-125 грамм. Тулăра вăл виçе 93 грамм, урпара 85 грамм. Выльăхсем тритикален симĕс массине юратса çиеççĕ. Унран хатĕрленĕ курăк çăнăхĕ, сенаж тата силос пысăк пахалăхлă апат шутланать. 100 килограмм симĕс массăра 22-25 ц апат единици тата 2,3-2,7 килограмм ирĕлекен протеин пур.

Чăваш Республикинче тритикале вăй илсе пыракан культура кăна. Юлашки çулсенче пирĕн районта тритикален «Михась» сортне Чапаев яч. хис., Суворов яч. хис., «Сеятель» хуçалăхсенче акса туса илме пуçларĕç. Вăтам тухăç 30 центнертан иртни ку культурăпа ĕçлемелли пирки калать. «Ударник», «Герой» хуçалăхсемпе В. Бархаткин хресчен (фермер) хуçалăхĕнче туса илекен «Житница» сорт та гектартан 30 центнер тухăç пани – ырă пулăм.

Çак ырă енсене шута илсе тата хуçалăхсенче кĕр аки пуçланнине пăхса тритикале акса хăварассине те иккĕмĕш вырăна хăварас марччĕ. Ăна таса пусăсем çине, пăрçа йышши культурăсем тата пĕр çуллăха акнă клевер хыççăн аксан тухăç пысăк пуласси паллă. Тритикале анисем çине кали удобренине ытларах хывни, тырă культурисем хыççăн пулăхлăх пĕчĕкленнĕ лаптăксене азот удобренийĕсене гектар пуçне 30 килограмм хушни тухăça ўстерме пулăшать. Кунпа пĕрлех ку культурăна имçамласси – обязательнăй ĕç.

Тритикалене акмалли оптималлă вăхăт – август вĕçĕпе сентябрĕн пĕрремĕш пилĕк кунлăхĕ. Иртерех акни калча ўссе кайнипе тата сăтăрçăсем ытларах «ĕçленипе» тухăça пĕчĕклетет. Каярах юлса аксан калчасем çителĕклĕ пиçĕхсе юлайманнипе тата кирлĕ чухлĕ çăралайманнипе хĕл япăх каçаççĕ – каллех тухăç пĕчĕкленет.

Официально

**Чувашская Республика**
**Собрание депутатов**
**Москакасинского сельского поселения**
**Моргаушского района**
**РЕШЕНИЕ**

**21.08.2009 г. № 32/2**

д. Москакасы

**О внесении изменений и дополнений в решение Собрания депутатов Москакасинского сельского поселения Моргаушского района от 30.09.2008 № С-24/1 «О Положении «О вопросах налогового регулирования в Москакасинском сельском поселении, отнесенных законодательством Российской Федерации и Чувашской Республики о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»**

**Собрание депутатов Москакасинского сельского поселения решило:**

***1 .*** Внести в решение Собрания депутатов Москакасинского сельского поселения Моргаушского района от 30.09.2008 г. №С-24/1 «О Положении «О вопросах налогового регулирования в Москакасинском сельском поселении, отнесенных законодательством Российской Федерации и Чувашской Республики о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления» следующие изменения:

*1.1.* Статью 19 изложить в следующей редакции:

«Настоящим решением устанавливаются следующие ставки земельного налога:

- 0,3 процента от кадастровой стоимости в отношении земельных участков, отнесенных к землям сельскохозяйственного назначения или к землям в составе зон сельскохозяйственного использования и используемых для сельскохозяйственного производства и для приобретенных (предоставленных) для садоводства и огородничества;
- 0,05 процента от кадастровой стоимости в отношении земельных участков, предназначенных для размещения домов многоэтажной жилой застройки;
- 0,3 процента от кадастровой стоимости в отношении земельных участков, предназначенных для размещения домов индивидуальной жилой застройки;
- 0,5 процента от кадастровой стоимости в отношении земельных участков, предназначенных для размещения объектов торговли, общественного питания и бытового обслуживания;
- 0,1 процента от кадастровой стоимости в отношении земельных участков, предназначенных для размещения административных и офисных зданий, объектов образования, науки, здравоохранения и социального обеспечения, физической культуры и спорта, культуры, искусства, религии;
- 1,5 процента от кадастровой стоимости в отношении прочих земельных участков».

*1.2.* Статью 20 изложить в следующей редакции:

«1. Установить, что для организаций и физических лиц, обладающих земельными участками на праве собственности, праве постоянного (бессрочного) пользования или праве пожизненного наследуемого владения в пределах границ Москакасинского сельского поселения, льготы, установленные в соответствии со статьями 391 и 395 Налогового кодекса Российской Федерации, действуют в полном объеме.

2. Освобождаются от налогообложения органы местного самоуправления, учреждения образования, здравоохранения, социального обслуживания, культуры, физической культуры и спорта, туризма, финансируемые за счет средств районного бюджета Моргаушского района и бюджета Москакасинского сельского поселения.

3. Налоговая база на одного налогоплательщика на территории д. Москакасы в отношении земельного участка, предназначенного для размещения домов индивидуальной жилой застройки, находящегося в собственности, постоянном (бессрочном) пользовании или пожизненном наследуемом владении налогоплательщика - физического лица уменьшается на не облагаемую налогом сумму в следующих размерах:

| Площадь земельного участка, м2 | до 1000 | от 1001 до 1500 | от 1501 до 1700 | от 1701 до 1900 | от 1901 до 2000 | от 2001 до 2100 | от 2101 до 2500 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Необлагаемая налогом сумма, руб. | 210000 | 312000 | 354000 | 396000 | 416000 | 437000 | 520000 |

| Площадь земельного участка, м2 | от 2501 до 3000 | от 3001 до 3500 | от 3501 до 3700 | от 3701 до 3800 | от 3801 до 3900 | от 3901 до 4000 | св. 4000 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Необлагаемая налогом сумма, руб. | 624000 | 728000 | 770000 | 791000 | 811000 | 832000 | 853000 |

***2.*** Установить, что настоящее решение вступает в силу со дня его официального опубликования и распространяется на правоотношения, возникшие с 01 января 2009 года.

**Глава Москакасинского сельского поселения Моргаушского района М.М. ПУШКИН.**